К.В. Иванов пурлăхĕ çинчен // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 12 ака.

# К. В. Иванов пурлăхĕ çинчен

Константин Васильевич Иванов ĕçĕсене хисеплесе, вăл тунă япаласене, унăн алли пырса тĕкĕннĕ хутсене пĕрне те çухатмалла мар, пурне те пĕр çĕре пухмалла. Ман шутпа, çине тăрса шырасан, К. В. Иванов çырнă, ун алли пырса тивнĕ япаласене халь нумай тупма пулать. «Сказки и предания чуваш» кĕнекене*) тата «Песня про купца Калашникова» кĕнекене**) кăларма типографие пичетлеме панă алçырăвĕсем, çав кĕнекесен корректура листисем пĕри те çухалман пулĕ тетĕп эпĕ. Шыраса тупасчĕ тесе ĕçлекен çын кăна никам та çук. Кĕнекесене тўрлетес (редакцилес) ĕçре К. В. Иванов епле ĕçленĕ, вăл тўрлетнĕ листасене, çав кĕнекесен К. В. Иванов тытнă корректура листисене пурне те пĕри юлмиччен тупма пултармалла. Вĕсем пурте Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн архивĕнче пулмалла. Çакна эпĕ акă мĕншĕн пит шанчăклă ĕнентерсе калатăп: ун пек япаласене çав шкул инспекторĕ И. Я. Яковлев пĕр хут татăкне те çухаттарман, пурне те пит йĕркеллĕ упраса пынă. Вĕсем пурте уйрăм деласем ăшĕнче пулмалла. Малта каланă «Сказки и предания чуваш» кĕнекепе «Песня про купца Калашникова» кĕнекесĕр пуçне çак кĕнекесен алçырăвĕсемпе корректура листисем пулмалла: «Первая книга после букваря», «Первая и вторая книги для чтения» (Л. Н. Толстойăн), «Третья и четвертая книги для чтения» (Л. Н. Толстойăн), «Книга для классного чтения» – (А. Барановăн), «Кавказский пленник» (Л. Н. Толстойăн), «Бог правду видит, да не скоро скажет» (Л. Н. Толстойăн). «Аленький цветочек» (Аксаковăн). «Дикие лебеди» (Андерсенăн), «Образцы мотивов чувашский народных песен и тексты к ним» – 1908 ç., «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним» – часть 2-я, 1912 ç., букварьсем – 1907 çултан пуçласа, букварьсем хушшинче чи паххи – 1912 çулта тухни***), мĕншĕн тесен унта пур картинăсем те К. В. Иванов ўкернисем.

Шкул делисем хушшинчех К. В. Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулне кĕме панă заявленисене, унăн ытти çырăвĕсене те (1907 çулта шкултан кăларса янă хыççăн И. Я. Яковлев пат. не çырнине, тата ниçта та учителе кĕме вырăн паманни çинчен И. Я. Яковлев патне 1909-мĕш çулта çырнине те) тупма пулать. Малтанхи хут Чĕмпĕрти чăваш шкулне кĕме панă заявленипе пĕрле ытти документсем те пулмалла: ялти шкултан вĕренсе тухнă свидетельство, Белебейри городской училищере вĕренни çинчен, çурални çинчен метрика хучĕ т. ыт. те. Хатĕрлев класĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн панă свидетельство та пулма кирлĕ. Деласем ăшĕнчех К. В. Иванова хатĕрлев классенче (хĕрачасен, арçын ачасен) вĕрентме учителе илнĕ документсем, вăл мĕн чухлĕ шалу илни, свидетельствăсем çине алă пусни т. ыт. те упранаççĕ пулĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчех вăл ўкернĕ картинăсемпе чертежсем, фото-ўкерчĕксемпе негативсем (столярнай ĕçсен чертежĕсем, ашшĕ сăнĕ, амĕш сăнĕ, Н. Н. Никаноров сăнĕ), шкулта «Иван Сусанин» оперăна лартнă чух ўкернĕ декорацисем, сцена валли çырнă занавессем пулма тивĕç.

Унсăр пуçне Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн делисем ăшĕнче К. В. Иванова тивекен хутсем тата та нумай пулмалла, сăмахран: вĕсен класне пĕтĕмĕшпех кăларса яни çинчен т. ыт. те.

Чемпĕрти чăваш шкулĕн делисем ăшĕнчех К. В. Иванов халăх учителĕ ятне илнĕ свидетельство пулмалла. Ун пек свидетельство ку деласем хушшинче пулмасан, унăн копине Ульяновскра I-мĕш классически гимназин 1909 çулхи делисем ăшĕнче шыраса тупас пулать*). Çав гимназирех К. В. Иванов прошенийĕ пулмалла, прошенипе пĕрле панă документсем, вĕсем хушшинче И. Я. Яковлев панă отзыв т. ыт. те.

К. В. Иванов прокламацисем çырма май пултăр тесе алпа пичетлемелли машина тунă. Çав машина халь Уфари музейра, теççĕ. Юбилей вăхăтĕнче çав машинăна Шупашкарта кăтартма пит тивĕçлĕ.

Тата 1915 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче К. В. Иванов шăллĕ Квинтилиан Иванов вĕренсе тухрĕ. Квинтилианран 1–2 çул малтан К. В. Иванов йăмăкĕ Мария Иванова вĕренсе тухрĕ. Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чух Квинтилианпа Мария К. В. Иванов çинчен чылай кала-кала паратчĕç, вăл ўкернĕ картинăсене кăтартатчĕç. Чăваш писателĕсен союзĕнчи юлташсен, Мария Васильевнăпа Квинтилиан Васильевича тĕл пулса, К. В. Иванов пурнăçĕ çинчен, унăн пурлăхĕ çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлме тăрăшмалла. Ку ĕçе вăраха ямалла мар, астăвакансем пурăннă чухне тумалла ăна. Юбилейччен, хальтерех пурнăçа кĕртсен тем пекех лайăх пулнă пулĕччĕ.

*) Çак кĕнекере 1908 çулта К. В. Ивановăн çак произведенийĕсем малтанхи хут пичетленсе тухнă: «Нарспи», «Йкĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм».

**) Ку кĕнекере 1908 çулта К. В. Иванов куçарнă М. Ю. Лермонтовăн çак произведенийĕсем малтанхи хут чăвашла пичетленсе тухаççĕ: «Калашник хуçа çинчен хунă юрă», «Пирĕштти», «Парăс», «Хумсемпе çынсем», «Чул ту», «Тусен тăррисем», «Пўрнăç курки», «Тĕрме çынни».

***) Ку букваре ним улăштармасăр тенĕ пекех 1925 çулччен çултан çулах кăларса пычĕç.

*) К. В. Иванов учителе тухма экзамен çав гимназире панă.

—≈≈≈≈≈≈≈—